15-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ИЮНЬ
5
ЭРНЕКУН
129(6064) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

А. И. Быховский, Б. Л. Ванников, Л. Р. Гонор, А. С. Елян, В. Н. Новиков тата Д. Ф. Устинов юлташсене Социализмлă Ĕç Геройĕн званине парасси çинчен

Производствăна организацилес ĕçре палăрса тăракан питĕ пысăк заслугăсемшĕн, артиллерипе стрелковăй вооруженийĕн çĕнĕ тĕсĕсене тăвас ĕçре пысăк ăнăçлăх тума пултарнăшăн Ленин орденĕ тата «Серп и Молот» ылттăн медаль парса, Социализмлă Ĕç Геройĕн званине парас:

1. Абрам Исаевич Быховские—Вооружени наркоматĕн 172-мĕш номерлĕ заводĕн директорне.
2. Борис Львович Ванникова—Вооружени наркомĕн заместителĕ пулнăскере, халĕ ССР Союзĕн боеприпассен Халăх Комиссарне.
3. Лев Робертович Гонера—Вооружени наркоматĕн 221-мĕш номерлĕ заводĕн директорне.
4. Амо Сергеевич Еляна—Вооружени наркоматĕн 92-мĕш номерлĕ заводĕн директорне.
5. Владимир Николаевич Новикова—ССР Союзĕн Вооружени Халăх Комиссарĕн заместительне.
6. Дмитрий Федорович Устинова—ССР Союзĕн Вооружени Халăх Комиссарне.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти июнĕн 3-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Мускаври И. В. Сталин ячĕпе тăракан автомобиль заводне Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Оборона продукцине кăларас тĕлĕшпе Правительство панă заданисене кăтартуллă пурнăçа кĕртнĕшĕн ССР Союзĕн Вăтам машиностроени Наркоматĕн Мускаври И. В. Сталин ячĕпе тăракан автомобиль заводне **Ленин орденĕпе** наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти июнĕн 3-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Вооружени Наркоматĕн 92-мĕш номерлĕ заводне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Вооруженин çĕнĕ тĕсĕсене туса кăларас тата вĕсене тума вĕренсе çитес тĕлĕшпе Правительство панă заданисене кăтартуллă пурнăçа кĕртнĕшĕн Вооружени Халăх Комиссариачĕн Ленин ячĕпе тăракан 92-мĕш номерлĕ заводне **Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе** наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти июнĕн 3-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Вооружени Наркоматĕн 172-мĕш номерлĕ заводне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Вооруженин çĕнĕ тĕсĕсене туса кăларас тата вĕсене тума вĕренсе çитес тĕлĕшпе Правительство панă заданисене кăтартуллă пурнăçа кĕртнĕшĕн Вооружени Халăх Комиссариачĕн Ленин ячĕпе тăракан 172-мĕш номерлĕ заводне **Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе** наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти июнĕн 3-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Вооружени Наркоматĕн 3-мĕш номерлĕ заводне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Вооруженин çĕнĕ тĕсĕсене туса кăларас тата вĕсене тума вĕренсе çитес тĕлĕшпе Правительство панă заданисене кăтартуллă пурнăçа кĕртнĕшĕн Вооружени Халăх Комиссариачĕн 3-мĕш номерлĕ заводне **Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе** наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти июнĕн 3-мĕш.

Афганистанăн королĕ Мохаммед Захир Шах патне М. И. Калинин янă саламлă телеграмма

Афганистанăн майăн 27-мĕшĕнче пулнă нациллĕ праздникĕ тĕлне СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин Афганистанăн королĕ Мохаммед Захир Шах патне çакăн пек саламлă телеграмма янă: «Афганистан никама пăхăнманни 24 çул тултарнă кун Сирĕн величествăна чунтан сывлăх сунатăп тата Сирĕн çĕршывăра çитĕнӳсем туса чечекленсе ӳссе пыма сунатăп».

Мохаммед Захир Шах М. И. Калинин патне янă телеграмма

М. И. Калининăн саламлă телеграммине ответлесе Мохаммед Захир Шах çакăн пек телеграмма янă:

«Сирĕн превосходительствăна мана юратса сывлăх суннăшăн тав тăватăп тата Сирĕн превосходительствăна Сирĕн çĕршывăр чаплă пултăр та чечекленсе ӳсе пытăр тесе сунатăп».

Государствăна тырă парассĕ

Мамăш ялсоветĕнчи (Ишлей районĕ) Буденный ячĕпе тăракан колхоз 1942 çулшăн государствăна 12 центнер тырă пачĕ. «Коммунист», «17-мĕш партсъезд» тата Каманин ячĕпе тăракан колхозсем тырра государствăна пама хатĕрлеççĕ: тасатса хĕвел çинче типĕтеççĕ. Вĕсем 1942 çулшăн государствăна тырă памалли обязательствăсене çитес кунсенчех тултарма пулчĕç.

П. РЫКОВ,

Ялсовет исполкомĕн председателĕ.

* * *

ЭЛĔК, июнĕн 4-мĕш. (**Телефонпа**). Районри колхозсем государствăна 1942 çулти обязательство шучĕпе тырă пама тытăнчĕç. Нумайĕш колхозсем халĕ памалли тырăсене хĕвел çинче типĕтеççĕ. Юманлăхри Буденный ячĕпе тăракан колхоз çак кунсенче Заготзерно пунктне 18,83 центнер тырă леçсе пачĕ.



УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Калининри шыв вокзалĕ. Ана гитлеровецсем çĕмĕрнĕ пулнă, халĕ юсаса çитернĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 3-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 3-мĕшĕнче фронтра паллă ĕççемех пулман. Фронтăн хăшпĕр участокĕсенче вырăнти çапăçусем пулса иртнĕ.

* * *

Июнĕн 2-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен темиçе танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 40 автомашинине, 9 полевой тата зенитнăй орудине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, икĕ торпеднăй катера путарнă, хуралта çӳрекен пĕр карапа тата 12 транспорта сиенленĕ, противникăн пехотине 4 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем противникăн йывăр артиллери батарейине, 8 пулеметне пĕтерсе тăкнă, гитлеровецсем кĕрсе ларнă темиçе блиндажа çĕмĕрнĕ. Противникăн 500 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противник Рябушин юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçа хирĕç атака пуçласа янă. Пирĕн боецсем атакăна сирсе янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 виллине яхăн выртса юлнă. Нимĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Артиллери разведки халăх пурăнакан К. пунктра тăшманăн аэродромĕ çине нимĕçсен 2 транспортнăй самолечĕ анса ларни çинчен пĕлтернĕ. Быстранов лейтенантăн батарейи аэродром çине пеме пуçланă та темиçе хут персех нимĕçсен 2 самолетне те пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ иртнĕ эрнере нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 537 çынна вĕлернĕ, нимĕçсен 6 танкне, 5 огневой точкине, 2 пулеметне тата çар грузĕ турттарса пыракан автомашинине пĕтерсе тăкнă. Партизансем чылай çĕрте чугунçул линине сирпĕнтерсе янă, нимĕçсен пехота, хĕçпăшал тата боеприпассем турттарса пыракан 2 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Çак кунсенче пирĕн пĕр аэродром çине нимĕçсен «Мессершмитт-109» йышши икĕ истребителĕ анса ларнă. Красноармеецсем пынине курсан, нимĕç летчикĕсем аллисене çӳлелле çĕкленĕ те тыткăна парăннă. Икĕ самолечĕ те юсавлă пулнă. Баксенче горючи çителĕклĕ пулнă. Çапăçмалли хатĕрсен комплектне пĕтермен. Пĕр самолечĕ 1942 çулта туса кăларнăскер, заводра лартнă номерлĕ 13.233, тепĕр самолечĕ 1941 çулта туса кăларнăскер, заводра лартнă номерĕ 7.646. Тыткăна парăннă летчиксем — 3-мĕш истребительнăй эскадрăри 8-мĕш группăн 9-мĕш отрядĕнчи унтер-офицер Эрих Фолькман тата ефрейтор Адальберт Кун çапла каланă: эпир вырăссене хирĕç вăрçма килĕшместпĕр, мĕншĕн тесен эпир Германин парăнмалли поражени тӳсмелле пулать тесе шутлатпăр, тенĕ. Адальберт Кун ефрейтор çапла каласа панă: «Майăн 26-мĕш кунĕнчен пуçласа пирĕн авиаци вырăссен авиацийĕ кашни кунах вĕçе-вĕçе пырса вăйлăн çĕмĕрсе тăчĕ. Вырăс самолечĕсем пăрахнă бомбăсем пирĕн 3-мĕш группăна кăна илсен те 12 самолет таран пĕтерсе тăкрĕç. Техника тĕлĕшпе ĕçлекенсемпе вĕçекенсем хушшинче вилнисем пур. Эпĕ тахçанах вырăссем енне вĕçсе каçма шут тытнăччĕ, çавăнпа та май килсенех хамăн шухăша пурнăçа кĕртрĕм. Мана патруль составĕнче бомбардировщиксене хӳтĕлесе пыма ячĕç. Сывлăшра часах ман çума Эрих Фолькман вĕçсе пычĕ. Эпир унпа пĕр-пĕринпе туслă пурăннă. Унпа вырăссем енне вĕçсе каяс-си çинчен малтанах калаçса татăлнăччĕ. Майлă площадка суйласа илтĕмĕр те лайăххăн анса лартăмăр».

* * *

Римри радио июнĕн 2-мĕшĕнче Калинин хули патĕнче çапăçусем пыраççĕ текен сенсациллĕ пĕлтерӳ сарнă. Италири суеçĕсем ним вăтанмасăр: «Калинин хули тулашĕнче тăракан Германи войскисем хулана совет войскисенчен тасатма хăтланаççĕ», тесе ĕнентересшĕн. Çак «пĕлтерӳре» чăн сăмах алари шыв чухлех, çавăн пек сӳпĕлтетнине тăрă шыв çине кăларас тесе тăрăшма та кирлех мар пек туйăнать. Хĕрлĕ Çар нимĕçсене Калинин хулинчен хĕллех çапса кăларчĕ, вĕсене вăл хĕвеланăçнелле инçене хăваласа ячĕ. Чăнах та ĕнтĕ, Калинин хули тулашĕнче нимĕç салтакĕсен 10 пин вилли ытла выртса юлчĕ. Анчах халĕ вĕсем пурте çĕр айĕнче выртаççĕ, çавăнпа та нипле те «Калинин хулине совет войскисенчен тасатма» хăтланса пăхма пултараймаççĕ.

Çавăн пек элеклесе, пулман япаласем çинчен хыпарсем сарса гитлеровецсемпе вĕсен итальянец-хӳрешкисем мĕнле тĕллев тытни курăнсах тăрать. Фашистсем çуркуннепе тĕнĕл держависен татăклă çĕнтерӳ пуласси çинчен хĕлĕпех тата таçта та кăшкăрса çӳрерĕç. Çуркунне çитсе иртсе кайрĕ, татăклă çĕнтерӳсем çук та çук. Панкрута тухнă гитлерла жуликсем ĕнтĕ нимĕçсен фашистла войскисен çĕнтерӳвĕсем çинчен суя хыпарсем сарма тытăнчĕç. Керчьре тата Харьков патĕнче совет салтакĕсене тыткăна илни çинчен тата совет техникине пĕтерни çинчен калакан тĕлĕкри цифрăсене тĕнчене туртса кăларнă пекех, Калинин хули тулашĕнче пыракан çапăçусем çинчен те çавăн пекех суйса сырнă вĕсем. Гитлеровецсем фальшивкăсем тума тата пустуй лĕпĕртетме ăсталанса кайнине такам та пĕлет. Анчах та суя япалан ĕмĕрĕ кĕске, суяпа инçех кайма çук.

Июнĕн 4-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июнĕн 4-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Противникăн тылĕнче кĕрешекен пирĕн часть (Хĕвеланăç фрончĕ) нимĕçсен танксем пулăшнипе наступлени туса пынă пехотин атакине сирсе пăрахнă. Противникăн 300 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 3 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Пирĕн пĕр стрелковăй чаçăн разведки çĕрле противникăн тылне кĕрсе кайнă та нимĕçсен подразделенине атакăланă. Разведчиксем 150 гитлеровеца вĕлернĕ, пулеметсен 5 йăвине пĕтерсе тăкнă тата 5 дзота çĕмĕрнĕ.

* * *

Нимĕçсен авиацийĕ июнĕн 2-мĕшĕнче пирĕн çурçĕрти пĕр объект çине вĕçсе пырса тапăнма икĕ хутчен хăтланса пăхнă. Противникăн самолечĕсене каялла хăваласа янă. Зенитнăй артиллери тата пирĕн истребительсем нимĕçсен 12 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Пирĕн пĕр чаçри красноармеец снайперсем (Калинин фрончĕ) пĕр кун хушшинче 69 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Зайцев лейтенант нимĕçсен транспортнăй самолечĕ çине ручной пулеметран пеме тытăннă. Темиçе черет персе ярсан самолета вут тивнĕ те, вăл çĕр çине персе аннă.

* * *

Украина партизанĕсен 3. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ ăнăçлă операцийĕсем çинчен хыпар илнĕ. Партизансем тăшманăн автоколонни çине пырса тапăннă та боеприпассем тиенĕ 9 грузовика тата пĕр броневика сунтарса янă. Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 60 çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Финсен 32-мĕш пехотнăй полкĕн минометнăй ротинчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă салтак К. Лене çапла каласа панă: «Апрелĕн вĕçĕнче 32-мĕш пехотнăй полкăн 2-мĕш батальонĕнчи салтаксем хăйсене киле яма ыйтса, полк командирне Вуоко полковника заявлени çырса панă. Салтаксем çапла çырнă: эпир ыйтнине пурнăçламасан, эпир хамăр ирĕкпе хамăр килсене саланатпăр, тенĕ. Командовани çав заявлени çине алă пуснă салтаксене вара питĕ хаяррăн тыткаланă. 100 çынна ытла тытса хупнă. Салтаксене нумайĕшне тарса пытанма, çапла майпа хăйсене тытса хупассинчен хăтăлма май килнĕ. Манăн пиччĕ ĕнтĕ тахçанах тарнă, вăл вăрмансенче пытанса пурăнать. Нумай салтаксем хăйсен пăшалĕсемпех тарнă. Хресченсем таркăнсене тытса памаççĕ çеç мар, вĕсене полицирен пытарса усраççĕ».

* * *

Нимĕçсен обер-ефрейторĕ Е. Райхер нумаях пулмасть Германие хăйĕн ашшĕ патне çапла çырнă: «Кунта, Украинăра, çĕр лаптăкĕн пысăк пайĕ сухаланмасăр-акăнмасăрах юлчĕ. Хресченсем хăйсем валли çеç пĕртак çĕрулми лартса хăварчĕç».

* * *

Италире фашистсен партин гитлерла Германипе çыхăну тытма пăрахассишĕн тăракан членĕсене арестленĕ. Çапла пĕлтереççĕ: Римра, Венецире, Миланра, Неапольре тата ытти хуласенче те оппозициллĕ группăсене тытнă, çав группăсем Муссолинине, Чианăна ĕçрен пăрса ярса, Германие итлемесĕрех ĕçлеме пултаракан правительство тăвасшăн пулнă.

* * *

Берлин çывăхĕнчи пĕр пысăк заводра металлурги заводĕнче рабочисем 14 сехетлĕ ĕç кунĕ тунине хирĕç протестлесе забастовка тунă. Вĕсем ĕç кунне кĕскетме тата апата лайăхлатма ыйтнă. Гестапо агенчĕсем нумай рабочисене тытса хупнă, завода çавăрса илнĕ те 10 кун хушшинче унтан никама та кăларман. Темиçе çынна персе пăрахнă, çакăн пирки вара рабочисем çĕнĕрен тапăхса кайнă.

Çуракинче пысăк ĕç тухăçлăхĕпе тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕçсынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

64. **Семен Константинович Краснов** — Улатăр МТС-ĕнчи тракторист. Вăл хăйĕн планне кашни сменăрах 156 процента çити тултарса пырать, çав вăхăтрах горючи перекетлесе хăварать.

65. **Макар Ефремович Родионов** —Ишлей МТС-ĕнчи тракторист. Вăл, СХТЗ тракторпа ĕçлесе, çураки ĕçĕсен планне майăн 15-мĕш тĕлне 121,4 процент тултарнă, 96 килограмм горючи перекетленĕ.

66. Ишлей районĕнчи **Папанин ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Серебряков** юлташ). Колхоз тĕштырă тата пăрçа-ясмăк культурисене 7 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен инкек курнă колхозниксене пулăшма колхоз 3 гектар акса хăварнă. Акара **Тимкоз** тата **Малышкин** юлташсен бригадисем хăйсене уйрăмăнах палăртнă. Çаксем фронтри пек ĕçленĕ: сухаçăсем **Д. Калашникова, М. Малышкина, А. Кузьмина, З. Тимкова** юлташсем, вĕсем кулленхи нормăна пĕрмаях 140 процента çити тултарса пынă; сӳрелекен **П. Иванов** юлташ, вăл нормăна 135 процента çити тултарса пынă. Çураки вăхăтĕнче пĕрлешсе апат çиессине организациленĕ. Кашни бригадăра 3-шер номер стена хаçачĕ кăларнă.

67. Ишлей районĕнчи **«Автогигант» колхоз** (колхоз председателĕ, **П. Трофимов** юлташ). Колхоз 7 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен инкек курнă колхозниксене пулăшма колхоз планран ирттерсе 2 гектар акса хăварнă. Çаксем фронтри пек ĕçленĕ: бригадир **Егор Горбунов** юлташ, сухаçăсем **П. Горбунов, Задонский, Н. Трофимов, М. Матюшкина** юлташсем, вĕсем хăйсен кулленхи нормисене 130-шар процент тултарса пынă; сӳрелекенсем— **А. Антонова** тата **М. Максимова юлташсем**, вĕсем кулленхи нормăна 140-шер процента çити тултарса пынă.

68. Ишлей районĕнчи **«Коммунар» колхоз** (колхоз председателĕ **Федоров юлташ**). Колхоз кĕске срокра акса пĕтернĕ. Акари ĕçсене агротехника тĕлĕшпе пысăк пахалăхпа туса ирттернĕ. Оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен инкек курнă колхозсене пулăшма колхоз планран ирттерсе 2 гектар акса хăварнă. Акара **Надежда Иванова** юлташăн бригади хăйне уйрăмăнах палăртнă, ку бригада 5 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Çаксем вăрçăри пек ĕçленĕ: сухаçă **А. Смелова** юлташ, вăл планра кăтартса панă 1,1 гектар вырăнне кунсеренех 1,3 гектар сухаланă; **Смирнова** юлташ, вăл планра кăтартса панă 1,1 гектар вырăнне 1,35 гектар сухаласа пынă; сӳрелекен **Телетова юлташ**, вăл кунсеренех 6,5 гектар сӳреленĕ, норма — 4 гектар.

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Канаш станцийĕн коллективĕ Улатăр станцийĕн коллективне ăмăртăва чĕнчĕ

Ленински чугунçулăн Мускав узелĕнче ĕçлекенсен чĕнĕвĕ çине ответлесе, Канаш станцинчи работниксем железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хутшăнчĕç. Çĕршывпа фронта кирлĕ таварсемпе хĕçпăшалсене вăхăтра тата пĕр чăрмавсăр турттарса тăрас тесе, вĕсем хăйсем çине çакăн пек обязательствăсем илчĕç:

пур поездсене те расписани тăрăх ăсатса тăмалла;

Лунин меточĕсемпе усă курса, стрелка хуçалăхне юсавлă тытмалла;

техникăллă эксплоатацин йĕркисене пĕре те пăсмалла мар, ĕçре брак тумалла мар.

Кусемсĕр пуçне станцири работниксем перронпа вокзала таса та культурăллă тытма, пассажирсене лайăх йышăнса ăсатма, кану пӳлĕмĕ организацилеме обязательство илеççĕ. Килхуçи хĕрарăмĕсем вокзал умне чечексем лартса симĕслетме, аманнă красноармеецсене пулăшу пама пулаççĕ.

Канаш станцийĕн коллективĕ çак пунктсемпе Улатăр станцийĕн коллективне социализмлă ăмăртăва чĕнчĕ. Чĕнĕве йышăннă.

ГАВРИКОВ,

Канаш вокзалĕн начальникĕ.

Азов тинĕсĕпе Дон шывĕнче ку çурта пулă нихăçанхинчен нумай тытаççĕ. **Укерчĕк çинче:** Азоври пулă комбиначĕн пулă заводĕнче. Тытнă пулла рыбасос текен машинăпа пушатаççĕ.

А. БРАТОЛЮБОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Май уйăхĕнчи результатсем

ÇĔМĔРЛЕ, июнĕн 3-мĕш. (**Телефонпа, хамăр корр.**). Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, комбинат коллективĕ май уйăхĕнчи производство планне чылай ирттерсе тултарчĕ. Ĕç тухăçлăхне обязательствăра кăтартнă пек 5 процент ӳстерес вырăнне 17 процент ӳстерчĕ. Сменăри нормăсене тултараман рабочисен хисепĕ апрель уйăхĕнчинчен 5 хут чакрĕ. Çав вăхăтрах двухсотниксемпе трехсотниксен йышĕ ӳсрĕ. Уйăхри нормăна столярсенчен Мигушов юлташ 330 проц., Андреев юлташ 313 проц. тултарчĕç, фрезеровщик Свиягин юлташ 228 процент тултарчĕ.

Х. ЛИСИН.

Пирĕн обязательствăсем

ВĂРНАР. Районри предприятисемпе артельсенче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Рабочисем, ăмăртăва хутшăнса, çĕршывпа фронта кирлĕ продукцисене ытларах туса кăларассишĕн кĕрешеççĕ.

Чи малтан ăмăртăва чугунçул станцин, урапа-çунасем юсакан мастерскойăн, «Труд» тата «Красный кустарь» артельсен коллективĕсем хутшăнчĕç.

Чугунçул станцинче ĕçлекенсем, графика тĕрĕс пурнăçласа пырса, поездсене хăвăрт ирттерсе яма, грузсем тиес тата пушатас плана 105 процент тултарма, вокзала культурăллă тытма пулчĕç. Кусемсĕр пуçне чылай рабочисем хăйсем уйрăм обязательствăсем илчĕç. Стрелочник Попов юлташ, Лунин меточĕпе усă курса, станцири стрелка хуçалăхне юсавлă тытма, Осип юлташ 4 стрелочница хатĕрлеме пулчĕç.

«Труд» артельре ĕçлекенсем производство планне уйăхсерен 150 процент тултарма обязательство илчĕç. Кунти рабочисем П. Никифоров, И. Садов юлташсем нормăна кулленех 150—170 процент тултараççĕ.

Урапа-çунасем юсакан мастерской коллективĕ ĕç планне кашни уйăхрах 125 процентран кая мар тултарма пулнă. Рабочисенчен кашниех ăмăртăва хутшăннă. Курапов, Тырлышкин тата Филин рабочисем нормăна пĕрмаях икĕ хут ирттерсе тултарма сăмах пачĕç.

Е. ВОЛКОВ.

МТС-семпе колхозсенчи социализмлă ăмăрту

Пысăк çĕкленӳпе

Машинно-тракторнăй станцин трактор бригадисем Куйбышев облаçĕнчи Больше-Раковски МТС-ăн коллективĕ МТС, МТМ тата ремонт тăвакан заводсенче ĕçлекенсене Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту организацилеме чĕнсе каланине пысăк çĕкленӳпе сӳтсе-яврĕç. Ăмăртăва активлăн хутшăнса, обязательствăсем илчĕç.

Тракторист Роман Павлов урапаллă тракторпа çураки вăхăтĕнче 150 гектар сухалама обязательство илнĕччĕ. Вăл ăна пурнăçларĕ. Çуракинче 172 гектар сухаларĕ, халĕ ирхи çĕртме сухинче тата тăрăшарах ĕçлет. Больше-Раковски МТС-ри трактористсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн Павлов юлташ кăçалхи ялхуçалăх çулĕнче тракторпа тумалли ĕççене 300 гектар лаптăк çинче тума обязательство илчĕ. Çĕртме сухине шута илсен, вăл паян куна 214 гектар сухаларĕ те.

МТС тракторисчĕсемпе трактористкисем Больше-Раковски МТС-ăн чĕнĕвне ырласа йышăнчĕç, трактористсемпе ремонтниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хутшăнса, çĕршывпа фронта çапла сăмах пачĕç: «Нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах çапса çĕмĕрес кăмăлпа эпир кăçал фронтри пек пысăк хастарлăхпа ĕçлеме пулатпăр. Урапаллă кашни тракторпа сменăра 7—8 шар гектар, СТЗ—НАТИ маркăллă кашни тракторпа 9-шар гектар сухалама пулатпăр, горючине 15 процент перекетлесе хăваратпăр. Ялхуçалăхĕнчи ĕççене пурне те пысăк пахалăхпа тума пулатпăр».

МТС çуракин планне вăхăтра пурнăçласа хăвараймарĕ пулсан та, халĕ ирхи çĕртме сухинче трактористсем пысăк çĕкленӳпе ĕçлени куç-кĕретĕнех курăнать. Виçĕ кун хушшинче МТС ирхи çĕртме сухи тăвас плана 30,8 процент пурнăçларĕ.

И. ЯХВАРОВ,
Элĕкри МТС директорĕ.

Çунтармалли тата сĕрмелли материалсене ытларах перекетлемелле

Отечественнăй аслă вăрçă тапхăрĕнче çунтармалли тата сĕрмелли материалсене тирпейлĕн тыткаласа усă курни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çакна ăнланса илсе, пирĕн МТС-ри трактористсем кăçал çунтармалли япаласене нормăпа пăхнинчен 7 процент перекетлесе хăварма, тракторсен ĕçĕн хăйне ларакан хакне 5 процент йӳнетме обязательство илнĕ. Халĕ çак обязательствăна чылай бригадăсем ĕçпе пурнăçлаççĕ. Г. Васильев ертсе пыракан 8-мĕш №-лĕ трактор бригадинчи трактористсем çуракинчи ĕçсен планне тултарнипе пĕрлех 854 килограмм краççин перекетлесе хăварчĕç. Бригадăри 33-мĕш №-лĕ тракторпа ĕçлекен М. Семенов хăйĕн сменинче 57 гектар ытла сухаласа, горючине 245 килограмм, унăн юлташĕ Н. Иванов 71 гектара яхăн сухаласа 241 килограмм перекетлесе хăварчĕç.

Çавăн пекех 4-мĕш бригадăри В. Захаров, Д. Аранов, Д. Ермолаева, Е. Петрова, А. Васильева тата П. Петров трактористсем те горючине чылай перекетленĕ. Çураки вăхăтĕнче пирĕн трактористсем горючине пурĕ 2500 килограмм перекетленĕ.

Анчах та горючине перекетлессишĕн пур трактористсем те тăрăшни çук-ха. Ăна вăрласа, кирлĕ мар çĕре расходласа пĕтерессинчен те хытă сыхланмалла. 7-мĕш бригадăри Е. Алексеев тракторист никамран ыйтмасăрах 10 килограмм краççина усăсăр расходланă. Ураскассинчи «Трудовая путь» колхозра трактора сĕрме панă 7 килограмм солидола пытарса хăварма тăнă. Кашни грамм бензин, краççин халĕ питĕ те кирлĕ, хаклă. Ăна хĕрхенсе, тирпейлĕн тыткаламалла. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕнче трактористсен фронтри пек ĕçлемелле, çав вăхăтрах горючипе тирпейлĕн усă курмалла.

В. ЧЕРНОВ,
Тăвай МТС политотдел начальникĕ.

Йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн фронтри пек кĕрешме ăмăртăва хутшăнчĕç

ШАХАСАН, июнĕн 3-мĕш. (Хамăр корр.). Казахсен Союзлă республикинчи Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен мĕнпур работниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне организацилеме чĕнсе каланине Шуркассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем пысăк хăмăлла ырларĕç. Колхозниксем колхозăн «Путь крестьянина» колхоз членĕсем вĕсене калаçнине те тимлĕн сӳтсе-явнă. Çавăн хыççăн колхозниксем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хутшăнса, хăйсем çине обязательствăсем илчĕç.

Колхоз кăçал выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана ирттерсе пурнăçларĕ. Вĕсен пур выльăх ферми те пур. Паянхи куна колхозра вăкăрсем 196 пуç, сыснасем 25, ĕнесем 41, лашасем 71 пуç пур. Кунсăр пуçне кăçал колхоз татах 28 пăру контрактацилесе хăварнă.

Колхозсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хутшăнса Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кăçал колхоз ферминчи сыснасен шутне татах та 10 процент, ĕнесен шутне 40 процент ӳстерме обязательство илчĕç. Кунсăр пуçне, Хĕрлĕ Çар валли 8 лаша уйăрса, вĕсене тĕрĕс-тĕкел çитĕнтерме шантарчĕç. Колхоз 1942 çулхи тăрăх парассине çак кунсенче 60 процент тултарнă. Кăçалхи улăха уйрăм 14 кун хушшинче пуçтарса кĕме, кашни колхозник ĕç нормине 120—130 процент тултарса ĕçлеме обязательство илчĕ. Константинова юлташ ертсе пыракан бригадăри колхозниксем пурте кашни кунах ĕç нормине 140—150 процент тултарса ĕçлеме обязательство илчĕç.

С. ШАДИН.

Ирхи çĕртме сухине туреç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июнĕн 3-мĕш. (Телефонпа). Хосакасси ялсоветĕнчи колхозсем ирхи çĕртме сухине туса пĕтерчĕç. «Пятилетка» колхоз 50 гектар, «Çĕнĕ ял» колхоз 30 гектар сухаларĕç.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Итемсене юсаççĕ

ИШЛЕИ, июнĕн 3-мĕш. (Телефонпа). Мишер ялсоветĕнчи «Серп и Молот» колхоз уйхиртен тырăсене пухса кĕртес ĕçе хатĕрленме тытăнчĕ. Колхозăн 2 бригади хăйсен итемĕсене тасатрĕç, итем ӳпли çине таса улăм витсе хăварчĕç, йĕри-таврари вырăна та çӳпçапран тасатрĕç.

З. М.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсем ĕçре пример кăтартаççĕ

Парти Кирпя станцинчи организацийĕ политикăллă-массăллă ĕçе тăтăшах туса пырать. Железнодорожниксем тата вĕсен çемйисем хушшинче калаçусем ирттерме агитаторсем уйăрнă. Вĕсем юлашки вăхăтра чугунçул çинчи транспорта ĕçлекенсен тивĕçĕсем çинчен калаçусем ирттерсе ĕçре тĕллĕн агитаци ирттерсе пычĕç. Ку калаçусем Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, çапăçу çинчи хыпарсене каласа кăтартаççĕ.

Кирпи железнодорожникĕсем воскресниксем туса линие, оборудованисене хатĕрсене юсанă, çитес хĕллене валли вутă хатĕрлесе тунă. Çав воскресниксенче ĕçлесе тупнă 1650 тенкĕ укçана çĕршыв оборонин фондне хывнă. Производствăра яланах коммунистсем ыттисене пример кăтартса пыраççĕ.

Пуçламăш парторганизацин секретарĕ Скоблев юлташ пушă вăхăтра ĕçлесе сигнал памалли фонарьсемпе дисксене пурне те юсанă тата сăрласа лартнă. Вăл территориальнăй парторганизацисемпе тачă çыхăну тытать, вĕсем вара ăна вагонсем çине грузсем тиеме тата вагонсене пушатма ĕç вăйĕ тупма пулăшаççĕ.

ВКП(б) членĕ Кувакинский юлташ Кирпяра кăна мар, çул отделенинче те лайăх стахановец шутланать. Вăл Кирпяри электростанцие пĕр тивĕç ĕçлекен тунă, ăна юсавлă тытать. Вăл оборудованисен пайĕсене ĕçлеттерме çу аммалли савăт шухăшласа тупнă, ку савăтпа усă курни çĕршыв материалсене перекетлеме май парать.

Сула тĕрĕслесе тăракан обходчиксем — ВКП(б) членĕ кандидачĕсем Малясова, Павлов юлташсем хăйсен ĕçĕсене юратса тăваççĕ, вĕсем шанса панă участоксене лайăх сыхлаççĕ, юсавлă тытаççĕ, çул юсакан рабочисене ĕçре пулăшаççĕ.

Коммунистсен хастарлă ĕçлесе кура станцири ытти рабочисем те тимлĕн ĕçлеççĕ. Мудров юлташ (товарнăй кассир) виçĕ çын ĕçне туса пырать. Унăн обязанноçне кĕмен ĕçсене туса пынăшăн илме тивĕçлĕ 450 тенкĕ ĕçукçине вăл кашни уйăхрах çĕршывăн оборона фондне парать. Парторганизаци çĕнĕ кадрсем хатĕрлеме тăрăшать: станцири пилĕк килхуçи хĕрарăмне стрелочник ĕçне вĕрентеççĕ.

Станцире ĕç дисциплинине тата технически эксплоатацин правилисене пăсни вăрçă пынă вăхăтра пĕрре те пулман.

Çапла вара, коммунистсем ĕçре пример кăтартса пыни станци ĕçне лайăхлатма май панă.

Комсомол уставне пăсаççĕ

ШĂХАСАН. Комсомолăн Чулкăмака ялсоветне кĕрекен «Память Ильича» колхоз çумĕнчи пуçламăш организацийĕнче 10 комсомолец. Йышне пăхсан, ялта пысăк вăй пур темелле. Анчах вĕсем начар ĕçлеççĕ. Колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе туса пымаççĕ. Ялти çамрăксемпе ĕçлессине те манăçа хăварнă. Çавăнпа комсомол йышĕ те ӳсеймест. Организаци çумĕнче ниепле кружок та йĕркелемен. Çитменнине комсомолецсем комсомол уставне пăсаççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕ 4—5 уйăх хушши член укçи тӳлемен. Организацине ертсе пырас, çӳлте асăннă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе пуçламăш организацин секретарĕ А. Маркова юлташ çителĕксĕр ĕçлет.

Хальхи вăхăт—вăрçă вăхăчĕ. Вăл комсомол организацисене лайăх ĕçлеме хушать. Çавăнпа комсомолăн «Память Ильича» колхоз çумĕнчи пуçламăш организацин ĕçне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек урăхлатса, çĕнетсе ямалла.

А. ФЕДОРОВ.

Кроса хутшăнма хатĕр

ИШЛЕИ. Профсоюз членĕсемпе комсомолецсен çуллахи кросĕ Ишлей, Ишек, Ярапайкасси, Янăш, Тăрăн, Хыркасси, Тивĕш пункчĕсенче иртмелле. Кроса хатĕрленсе ирттерес ĕçе оргкомитет ертсе пырать. Кросăн положенине профсоюзпа комсомолăн пуçламăш организацийĕсем патне вăхăтра çитернĕ.

Кроса хатĕрленес ĕçе комсомолăн организацийĕсенче секретарьсем активлă хутшăнаççĕ. Уйрăмăнах хатĕрленӳ ĕçĕ район центрĕнчи çамрăксем хушшинче аван пырать. Кунта пурĕ 320 çын кроса хутшăнать. Вĕсенчен 3 рота, 8 взвод тата кашни 10 çынран отделенисем уйăрнă. Кашниех медицина енĕпе тĕрĕслӳре пулнă.

Кросс пулмалли вырăна (дистанцие) палăртса хунă, флажоксем лартса тухнă. Халĕ унта кашни кунах çур километр хушши чупассипе, граната ывăтассипе тата хырăмпа шăвассипе тренировкăсем пулса иртеççĕ. Ку ĕçе Кудряшовпа Емельянов юлташсем ертсе пыраççĕ.

Кроса хатĕрленес ĕçе районри колхозсенче те аван йĕркеленĕ. Вăрман Сĕктер ялсоветĕнче тренировкăсем пулса иртеççĕ. Вĕсен кроса ирттермелли вырăн хатĕр. Участниксен сывлăхĕсене тĕрĕслеттернĕ.

Çавăн пекех Энтимĕркасси, Çĕньял Покровски ялсовечĕсенче те кроса тимлĕн хатĕрленеççĕ.

Районра пурĕ профсоюз членĕсемпе комсомолецсем 1.100 çын кроса хутшăнма заявка панă.

З. МИТРОФАНОВА.

* * *

КУКЕÇ. Кроса хутшăнма заявка панă 2.120 çын медицина енĕпе тĕрĕслӳре пулнă. Халĕ районри кустсенче тренировкăсем пыраççĕ. Толиково кустĕнче 354 çын икĕ хутчен тренировкăра пулнă. Унта главнăй судья пулса Николаев юлташ ĕçлет. Кӳкеç кустĕнче Надеждин юлташ ертсе пынипе 379 çын час-часах тренировкăсем туса ирттереççĕ.

Кроса комсомолецсемпе профсоюз членĕсемсĕр пуçне всевобуч боецĕсем хутшăнаççĕ. Вĕсем темиçе хутчен тренировкăсем тунă.

Н. АНТОНОВ,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

Çĕрпӳ районĕнчи комсомолецсемпе профсоюз членĕсем те кроса хатĕрленеççĕ. Ку ĕçе районра ятарласа организациленĕ оргкомитет ертсе пырать. Кросс районра 8 кустра пулса иртет. Кроса лайăх хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе кашни куст çумне районри активран пĕрер çын çирĕплетнĕ, судьясен коллегине уйăрнă. Халĕ пур çĕрте те хатĕрленӳ пырать. Хатĕрленес ĕçе уйрăмăнах фельдшерсен шкулĕнче, педучилищĕре аван йĕркеленĕ. Унта тренировкăсем организованно иртеççĕ. Пурте медицина тĕлĕшпе тĕрĕслӳре пулнă.

Кроса районра пурĕ 3 пине яхăн çамрăк хутшăнать.

Анчах кроса хатĕрленес тĕлĕшпе профсоюзăн хăшпĕр организацийĕсем начар ĕçленине палăртмалла. Уйрăмăнах финанспа банк работникĕсен союзĕ кроса хатĕрленес ĕçе хутшăнмасть. Вĕсем тренировкăсем ирттермеççĕ, участниксене медицина енĕпе тĕрĕслемен.

А. ВАСИЛЬЕВ,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Оккупациленĕ совет районĕсенчи гражданĕсем оккупантсене çавтери курайманççĕ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 3-мĕш. (ТАСС). «Франкфуртер цейтунг» ятлă гитлерла хаçатăн корреспонденчĕ хăй Карел-Финн ССР-ĕн оккупациленĕ районĕсем тăрăх çӳрени çинчен каласа парать. Корреспондент çав районсенчи халăхсен пурнăçĕ питĕ йывăррине пытараймасть, çав халăхсене оккупантсем пĕтĕмпех выçлăхпа чухăнлăха кĕртсе ӳкернĕ. Вăл çапла çырать: «Çынсен нумайĕшĕн пӳрт таврашĕ çук», халăха продовольстви парса тăрас ĕç унта Финляндиринчен те япăхрах, хăш районра та пулсан пĕтĕм районĕпе пĕр ĕне тупăнсан—вăл телей вара».

Совет гражданĕсем гитлеровецсен тата финсен фашистла захватчикĕсене курайманни корреспондентăн çак сăмахĕсенчен курăнать: «Совет çыннисемпе калаçма тытăнсан, вĕсем сасартăк чĕлхесĕр пулса тăраççĕ. Акă пирĕн умра çамрăк телефонистка. Унăн пичĕ çинче вăл пăртак чĕтренине курма пулать, куçĕсенче—пытарса тăракан курайманлăх курăнса тăрать. Эпир унпа калаçма тытăнсан, вăл хыçалалла çаврăнайса тăчĕ».

Нимĕçсем Совет Украининче алхасаççĕ

ЖЕНЕВА, июнĕн 3-мĕш. (ТАСС). Германи захватчикĕсем Совет Украинин вăхăтлăха оккупациленĕ районĕсенчи хула тата ял çыннисене ирĕксĕр ĕçлеме Германие çаплах вăйпа илсе каяççĕ. Германин информаци бюровĕ майăн 31-мĕшĕнче çапла пĕлтерет: Гитлерăн ĕç вăйĕсемпе усă курас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйĕ Заукель, нумай пулмасть Украинăна килнĕскер, «Германире украинецсем йышлăн ĕçлеççĕ те ĕнтĕ», тесе каланă тата «ĕç вăйне ним юлмиччен пĕтĕмпех мобилизацилеме кирлине» астутарнă.

Нимĕç оккупанчĕсем Совет Украининче тарçăсен рынокĕсемех тунă, унта Украина халăхне Германи промышленноçĕпе ялхуçалăхĕн представителĕсене сутаççĕ. Германин «ĕç фрончĕ» тенĕ организацийĕ, тесе пĕлтерет Германи агентстви, «Украинăри мĕнпур ĕç вăйĕсене пĕрлештерсе шута илсе тухать» тата Украинăри арçынсемпе хĕрарăмсене «сутмалли вырăна» илсе пырать. Нимĕçсен даннăйĕсем тăрăх, çакăн пек «вырăнсем», ĕç вăйĕсене пухмалли рыноксем, 14 шутланаççĕ ĕнтĕ. Германин информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: Германие илсе каймаллисен хисепне специалистсемпе ремесленниксем те кĕреççĕ, «мĕншĕн тесен вырăнти промышленноçа çĕмĕрсе пĕтернĕ, çав вăхăтрах Германи промышленноçĕпе ремесли валли кадрсем кирлĕ».

Германие вăйпа хăваласа кайнă Совет Украинин çыннисем мĕнле пурăнни çинчен кунта сведенисем илнĕ. Нимĕç пусмăрçисем хăваласа кайнă украинецсен пурлăхне, вырăна çитсен паратпăр, тесе туртса илеççĕ. Анчах украинецсенчен никам та пĕр япала та каялла илмен. Советăн Германири çыннисем тумтирсемпе кĕпе-йĕмсем çитмен пирки питĕ пысăк нуша тӳсеççĕ. Куракансем каласа панă тăрăх, вĕсем пурăнакан лагерьсем—çĕтĕк-çатăк, хуп-хура çынсем пухăннă вырăнсем; вĕсене вилĕм куллен вунăшарăн иле-иле каять. Вĕсене Польшăпа Францин тыткăна лекнĕ çыннисене паракан çимĕçпе, «национальное блюдо» тенĕскерпе, тăрантараççĕ. Çак блюдо темиçе ясмăк пĕрчинчен тата хывăхăн пĕчĕк-пĕчĕк таткинчен тăрать. Нимĕç хаçачĕсем хăйсем те—совет çыннисем выçăпа çавтери начарланса çитрĕç, ĕçлеме те пултараймаççĕ, тесе йышăнаççĕ. Вĕсем хушшинче тем тĕрлĕ чирсем те сарăлса кайнă, çав чирсемпе никам та кĕрешмест. Украинецсене килте юлнă çемьесемпе çыхăну тытма пачах чарса лартнă.

Прагăра татах асаплантарса вĕлереççĕ

ЖЕНЕВА, июнĕн 2-мĕш. (ТАСС). Прагăран пĕлтернĕ тăрăх, Гейдрих вырăнне «Чехипе Моравин протекторĕ» пулма çĕнĕрен лартнă Даллюге çапла каланă: «кам та кам аякран çеç пăхса тăрса, Германия Европăра çĕнĕ йĕрке тăвасшăн кĕрешнине хирĕç тăракан чехсене пĕтерме пулăшмасть», вĕсене Германи влаçĕсем тăшмансене тыткаланă пек тыткалĕç. «Çак принцип, — тенĕ Даллюге, — уйрăм халăхсене те пĕтĕмĕшпех пырса тивет», — тенĕ.

Гейдриха вĕлерме тапăнни, тесе юнанă Даллюге, чех халăхне «халĕ те тата малашне те питех те йывăр пурнăç» кăтартса тăрĕ. Кам та кам Германие хирĕç кăшт та пулин ĕçлет, ăна пĕтерсе тăкатпăр, тенĕ.

Прагăри радио татах çĕнĕрен 27 чеха асаплантарса вĕлерни çинчен пĕлтернĕ, вăл шутра 4 хĕрарăм, университетра ĕçлекен 2 профессор, çĕрĕç министерствин 2 чиновникĕ тата чехсен жандармерин пĕр майорĕ.

Майăн 31-мĕшĕпе июнĕн 1-мĕшĕнче 62 чеха асаплантарса вĕлернĕ.

Англи бомбардировщикĕсем Рур облаçĕ çине çĕнĕрен вĕççе пырса тапăнни

ЛОНДОН, июнĕн 3-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: июнĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк контингенчĕ Рур облаçĕнчи Эссен тата ытти объектсем çине вĕççе кайса тапăннă. Операци ăнăçлăн пулса иртнĕ тесе калаççĕ.

Çав операцирен Англин 14 бомбардировщикĕ каялла таврăнман.

Июнĕн 2-мĕшĕнче Англи авиацийĕ Ла-Манш тата Çурçĕр Франци çийĕнче çĕнĕрен пысăк наступленилле операцисем туса ирттернĕ.

Июнĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле противникăн йышлă мар самолечĕсем Кăнтăр-Хĕвелтухăç Англин районĕсем çине вĕççе пырса тапăннă.

Ливири вăрçă

ЛОНДОН, июнĕн 3-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: тĕнĕл держависен чылай йышлă вăйĕсем Англин Газала-Бир-Хакейм линийĕ хыçĕнче каллех хĕвелтухăçнелле талпăнаççĕ. Найц-Бриджран каякан çул Бир-Эль-Харматран каякан çулпа пĕрлешнĕ вырăнпа Газала-Бир-Хакейм линийĕ хушшинче халь хаяр çапăçусем пыраççĕ. Çав районран хĕвелтухăçнелли вырăнта Роммелĕн войскисене Англин бронетанковăй чаçĕсем хĕстерсе пыраççĕ.

«Таймс» хаçатăн корреспонденчĕ çапла калать: тыткăна лекнĕ салтаксем каласа панă тăрăх, нимĕçсен тĕллевĕ Тобрук патне мар, Барди патне «çиçĕм пек хăвăрт» вăркăнасси пулнă. Çав план халь ĕнтĕ арканса кайнă.

Францире гитлеровецсен агентне вĕлернĕ

ЖЕНЕВА, июнĕн 3-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви çапла пĕлтерет: июнĕн 2-мĕшĕнче каçхине велосипедпа пыракан пĕр паллăмар çын револьвертан 3 хут персе фашистсен «Кри ди непль» ятлă вăрă-хурахла хаçатăн главнăй редакторне Клемана вĕлернĕ. Ку хаçат гитлеровецăн Дорнон органĕ пулса тăрать. Вĕлерекен велосипедпа тарса çухалнă. Клеман арăмĕ тата тепĕр иртсе пыракан çын çăмăллăн аманнă.

Редакцирен

«Чăваш Коммунин» ĕнерхи номерĕнче, «Республика тĕштырăсем акас плана ирттерсе тултарчĕ» ятлă статьяра, ЧАССР Наркомземĕн айăпĕпе, пысăк йăнăш кайнă. Елчĕк районĕ июнĕн 1-мĕш тĕлне çĕрулми лартас плана сводкăра кăтартнă пек 9 процент мар, 95 процент тултарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Пирĕн земляксем

Летчик Ямутов

Етĕрнери педагогика училищинчен вĕренсе тухнă хыççăн 1939 çулта кĕркунне Яков Сергеевич Ямутова сывлăшри çар флотне илеççĕ. Вăл авиаци училищинче вĕренет, летчик пулса тăрать.

Çамрăк летчик-истребитель отечественнăй вăрçă пуçланнăранпах тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçнă. Вăл чылай боевой вĕçевре пулнă. Çав хушăра нимĕçсен 3 самолетне персе антарнă. Ямутов юлташ, звено командирĕ пулса тăрса, кирек мĕнле йывăрлăхсене те çĕнтерсе пынă. Çавăншăн Ямутов юлташа часть командованийĕ икĕ хутчен тав тăвать, «Боевой листок» çинче ăна мухтаса çырнă статьясем тухаççĕ.

Лейтенант Ямутов тăшманăн чугунçул çинче тăракан эшелонне пĕтерме задани илет. Вăл хăйĕн звенине çапăçăва ертсе каять. Вĕççе пынă чухне Ямутов пĕр лапамра тăшман войски йышлăн пухăнса тăнине курать. Фашистсем темĕнле приказ вулаççĕ пулас... Командир Ямутов хăйĕн юлташĕсене çапăçăва кĕме хатĕрленмеллине систерет. Çапăçăва кĕрессине çинчен юлташĕсене систернĕ хыççăн, вăл тăшман çинелле ыткăнать. Аллипе гашетка çине пусса, пулеметран персе, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене утă çулнă пек çулать. Юлташĕсем те ун хыççăн пырса тăшмана тапăнаççĕ. Тăшманăн колонни тăрăх виçĕ-тăватă хутчен вĕççе тухнă хыççăн, вĕсем боевой заданине пурнăçа кĕртме малалла вĕççе каяççĕ.

Чугунçул станцийĕ. Пĕр эшелон халь çеç тапранса каять. Пирĕн соколсем хăйсен кучченеçĕсене ун çине тăкаççĕ. Крушени пулнипе поезд чарăнса ларать. Кайран пĕлнĕ тăрăх, Ямутов звени çак çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене сахал мар пĕтерсе тăкнă.

Вăхăт каç енне сулăннă. Пирĕн летчиксем улттăн тăшмана хирĕç вĕççе тухаççĕ, нимĕçсен 10 самолетне хирĕç çапăçма тытăнаççĕ. Лейтенант Ямутов унăн самолечĕ çине тăшман хыçран тапăнма хăтланнине асăрхать. Хăйĕн самолетне хăвăрт çаврăнса, тăшман кĕтмен çĕртен унăн çине тапăнать. «Мессершмитт—109» çĕр çине чул пекех персе анать. Унăн юлташĕсем те тăшман самолечĕсене хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ. Çавна кура тăшманăн ытти самолечĕсем тарма тытăнаççĕ. Совет летчикĕсем вĕсене хăваласа каяççĕ. Çак çапăçура Ямутовăн самолетне тăшман зенитчикĕсем сиенленĕ. Ямутов парашютпа сиксе çĕр çине анма шухăшласа пăхать, анчах тăшман тылĕнче—шалта. Самолета çĕр çине антарса лартать. Тăшман тылне аннине летчик пĕлет. Вăл хăвăрт самолета вут тивретет те, пĕр яла тарса кĕрет, ял хĕринчи пĕчĕк пӳртре пĕр украинкăна тĕл пулать, хăйĕн тумтирне пăрахса хресчен тумтирĕ тăхăнать. Вара партизансен Н. юлташ ертсе пыракан отрядне хутшăнать. Партизансем пулăшнипе Ямутов 7 кун хушшинче фронт урлă каçса, каялла чаçе таврăнать. Авиачаçре ăна вилнĕ тесе шутланă пулнă. Ăна курсан, юлташĕсем çавтери савăнса кайнă.

Икĕ кун каннă хыççăн лейтенант Ямутов каллех тăшмана хирĕç çапăçма вĕççе тухать. Çак çапăçура вăл тăшманăн икĕ самолетне персе ӳкерет.

Çапăçусенчен пĕринче Ямутов юлташа хытă амантнă. Вăл çапах та самолета аэродром çине илсе çитернĕ. Ăна, юнланса пĕтнĕскере, самолет ăшĕнчен кăлараççĕ. Ямутов нумай çĕртен аманнă.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçнă çĕрте хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн командовани лейтенант Ямутов юлташа наградăлама тăратнă.

Аманнă хыççăн Ямутов юлташ тăван ялне—Етĕрне районĕнчи Атликассине отпуска таврăннă. Халĕ вăл всевобучăн Палтайри пункчĕн начальникĕ пулса тăрать.

В. ЛАЗАРЕВ.

Чувашскому сельскохозяйственному институту
ТРЕБУЮТСЯ:
1) шофер, 2) комендант.
Обращаться по адресу: ул. Калинина, 34.

Чебоксарской Райзаготконторе
ТРЕБУЮТСЯ: 1) конюх-сторож с оплатой по договоренности, обеспечивается общежитием; 2) рабочий для работы на складе.
За справками обращаться по адресу: Чебоксары, Волжская ул., дом № 1, Заготживсырье.

ТРЕБУЮТСЯ: техники-строители, электромонтеры, маляры, столяры, штукатуры, плотники, слесаря, кладовщики и разные рабочие для работы в г. Чебоксарах.
Справки по адресу: г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 7.

ЧЕБОКСАРСКОЙ ХЛОПЧАТОБУМАЖНОЙ ФАБРИКЕ
срочно требуются:
зам. главного бухгалтера, знающий учет производства, ст. бухгалтер по расчетам с рабочими и служащими, ст. бухгалтер по материальному учету.
Обращаться по адресу: ул. Карла Маркса, 20, к главному бухгалтеру.

НКФ СССР
КАЗАНСКИЙ ФИНАНСОВО-ЭКОНОМИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ ИМЕНИ В. В. КУЙБЫШЕВА
объявляет прием студентов на 1942—1943 учебный год.
Институт готовит высококвалифицированных экономистов-финансистов для работы в финансовой системе и спецбанках. Срок обучения 3 года.
Лица, окончившие среднюю школу в 1941 и 1942 годах, принимаются на 1-й курс без испытаний. В институт зачисляются студенты родственных экономических ВУЗ'ов и факультетов. Студенты обеспечиваются жилплощадью. При институте имеется столовая закрытого типа.
С 1-го июня 1942 г. при институте открываются курсы по подготовке в институт.
Заявления подавать по адресу: г. Казань, улица Бутлерова, д. 4, 3-й этаж, комната 18, Учебная часть.
Финансово-Экономический Институт.

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ
техник строитель-сметчик, коменданты общежитий;
КВАЛИФИЦИРОВАННЫЕ РАБОЧИЕ:
токари, строгальщики, термисты, слесаря-водопроводчики, жестянники, слесаря по сварным и железным конструкциям, инструментальщики, формовщики, обрубщики, лакомары, прессовщики, кузнец-молотобоец, шорник-смазчик, печник, штамповщицы, установщики штампов и пресформ, машинисты (компрессоров, литья под давлением насосов), маляры, каменщики, штукатуры, стекольщик, ящечники, упаковщики, плотники, подсобные рабочие, грузчики, уборщицы-курьеры.
Требуются пожарные работники (мужчины и женщины), которые обеспечиваются общежитием.
Принимаются переквалификанты от 16 лет.
Обращаться: Ленинградская ул., № 38, бюро пропусков.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 827 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 8, 58 64 п: я: